26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
10
ВЫРСАРНИКУН
202(6439) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Генерал-полковника ПЕТРОВА

Çурçĕр Кавказ фрончĕн çарĕсем, çĕр çинчен пыра-пыра çапса тата тинĕс çинчен десантсем антарса темиçе кун хушши вăйлăн çапăçнă хыççăн, тăшманăн Тамань çурутравĕ çинчи группировкине йăлтах арката тăкрĕç те паян, октябрĕн 9-мĕшĕнче, Тамань çурутравне нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатса пĕтерчĕç.

Çапла ĕнтĕ нимĕçсен Кубаньри операцисем тĕлĕшпе паха пулса тăракан плацдармне, вĕсене Крыма хÿтĕлеме тата Кавказалла тапăнса килме май пама пултарнăскерне, тĕппипех пĕтерсе тăкнă.

Тамань çурутравне ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче Леселидзе генерал-лейтенантăн, Гречко генерал-лейтенантăн, Гречкин генерал-майорăн, Хижняк генерал-майорăн, Провалов генерал-майорăн, Сергацков генерал-майорăн, Лучинский генерал-майорăн çарĕсем, авиаци генерал-лейтенанчĕн Вершининăн летчикĕсем, Владимирский вице-адмиралăн тата Горшков контр-адмиралăн морякĕсем чапа тухнă.

Пуринчен те ытларах çаксем чапа тухнă:

Колдубов полковникăн 83-мĕш Туркестански горно-стрелковăй дивизийĕ, Бушев генерал-майорăн 176-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Горбачев полковникăн 383-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Сафарян полковникăн 89-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Лисинов полковникăн 242-мĕш горно-стрелковăй дивизийĕ, Захаров генерал-майорăн 2-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, Василенко полковникăн 32-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă стрелковăй дивизийĕ, Кулаков полковникăн 339-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Турчинский генерал-майорăн 395-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Харичев полковникăн 255-мĕш Хĕрлĕ ялавлă тинĕс стрелковăй бригади, Ефимов полковникăн 62-мĕш тупăллă артиллери бригади, Засекин полковникăн 103-мĕш истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ, Захаров подполковникăн 44-мĕш Гвардейски минометнăй полкĕ, Иванов майорăн 35-мĕш понтонсемпе кĕперсен уйрăм батальонĕ, Мельничук подполковникăн 63-мĕш танковăй бригади, Степанович полковникăн 229-мĕш истребительнăй авиаци дивизийĕ, Бершанская майорăн 46-мĕш Гвардейски çĕрле вĕçекен çăмăл бомбардировочнăй авиаци полкĕ, Смирнов подполковникăн 502-мĕш штурмовой авиаци полкĕ, Савостьянов генерал-майорăн 276-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Преображенский полковникăн 227-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Охман полковникăн 316-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Попов майорăн 174-мĕш инженернăй батальонĕ, Жарков подполковникăн 50-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, Курашвили полковникăн 414-мĕш стрелковăй дивизийĕ, Гетман полковникăн 230-мĕш штурмовой авиаци дивизийĕ, артиллери генерал-майорĕн Порешинăн 125-мĕш Хĕрлĕ ялавлă пысăк хăватлă гаубицăллă артиллерин уйрăм бригади.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, Тамань çурутравне ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăсçене „Тамански", „Темрюкски", „Анапски" тата „Кубански" тесе ят парас.

Малашне сав соединенисемпе чăсçене çапла чĕнмелле тăвас:

89-мĕш Тамански стрелковăй дивизи,

242-мĕш Тамански горно-стрелковăй дивизи,

2-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Тамански стрелковăй дивизи,

32-мĕш Гвардейски Хĕрлĕ ялавлă Тамански стрелковăй дивизи,

339-мĕш Тамански стрелковăй дивизи,

395-мĕш Тамански стрелковăй дивизи,

255-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Тамански тинĕс стрелковăй бригади,

62-мĕш Тамански тупăллă артиллери бригади,

103-мĕш Тамански истребительнăй противотанковăй артиллери полкĕ,

44-мĕш Гвардейски Тамански минометнăй полкĕ,

35-мĕш Тамански понтонсемпе кĕперсен уйрăм батальонĕ,

63-мĕш Тамански танковăй бригада,

229-мĕш Тамански истребительнăй авиаци дивизийĕ,

46-мĕш Гвардейски Тамански çĕрле вĕçекен çăмăл бомбардировачнăй авиаци полкĕ,

502-мĕш Тамански штурмовой авиаци полкĕ,

276-мĕш Темрюкски стрелковăй дивизи,

227-мĕш Темрюкски стрелковăй дивизи,

316-мĕш Темрюкски стрелковăй дивизи,

174-мĕш Темрюкски инженернăй батальон,

50-мĕш Гвардейски Темрюкски минометнăй полк,

414-мĕш Анапски стрелковăй дивизи,

230-мĕш Кубански штурмовой авиаци дивизийĕ,

125-мĕш Хĕрлĕ ялавлă Кубански пысăк хăватлă гаубицăллă артиллерин уйрăм бригади,

83-мĕш Туркестански горно-стрелковăй дивизирен 128-мĕш Гвардейски Туркестански горно-стрелковăй дивизи тăвас,

176-мĕш стрелковăй дивизирен 129-мĕш Гвардейски стрелковăй дивизи тăвас.

Çĕнĕ Гвардейски дивизисене Гварди ялавĕсене парас.

383-мĕш стрелковăй дивизие уйрăмах ăста тата хăюллă çапăçнăшăн Хĕрлĕ ялав орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, октябрĕн 9-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици Мускав Тамань çурутравне ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, Тамань çурутравне ирĕке кăларнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, тав тăватăп.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешÿре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1943 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ОКТЯБРĔН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрĕн 8-мĕшĕнче ÇУРÇĔР КАВКАЗ фронтĕнчи çарсем ТАМАНЬ çурутравĕн çурçĕр пайне нимĕçсенчен тасатса пынă, тăшман çарĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе пынă. Нимĕçсен ГОЛУБИНСКИЙ, КУЧУГУРЫ, ФОНТАЛОВСКАЯ, ТАТАРСКИЙ, ВЕСЕЛЫЙ, ЗАПОРОЖСКАЯ ятлă тĕреклетнĕ пункчĕсене тытса илнĕ.

Вăтам ДНЕПР тăрăхĕнче пирĕн çарсем Днепрăн сылтăм хĕрринче нимĕçсенчен ĕнер тытса илнĕ вырăнсене аслăлатасшăн малтанхи районсенчех çапăçнă.

ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, 6 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, 150 яла ытла тытса илнĕ. Вăл шутра СИБЯКИ, КАСПЛЯНЕ, ПРАНИКИ, ВЕРХНИЕ КОШЕВИЧИ, НИЖНИЕ КОШЕВИЧИ, КОШЕВАТКА, ЗАГОРОДНО, РУБЕЖНИЦА, НОВАЯ БЕЛЬ, ЯКУБОВЩИНА, ЗАОЛЬША, ШУБКИ, ЛЮБАВИЧИ, КЛЕМЯТИНА, ЕФРЕМОВО, ДАШКОВЦЫ, ГЕРАСИМЕНКИ ятлă пысăк ялсене тата ЗАОЛЬША ятлă чугун çул станцине илнĕ.

НЕВЕЛЬ районĕнче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 60 яла ытла тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче ЛАХНЫ, КАСИЛОВО, РИКШИНО, БУСЛОВА, ЖУКОВО, РАКИ, БОЛОТНИЦА ятлă ялсене илнĕ.

Октябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 50 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен тупăсем тăшманăн 87 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Тамань çурутравĕ çинче пирĕн çарсем тăшман çарĕсен юлашкийĕсене пĕтерсе пынă. Пĕр соединени чăçĕсем Кучугуры, Фонталовская тата Татарский ятлă тĕркелетнĕ пунктсенче вырнаçса тăнă нимĕçсемпе çапăçнă. Каç пулса килнĕ тĕлелле çав ялсенче тăнă гитлеровецсен пысăк пайне пĕтерсе тăкнă, юлнисем вара тыткăна парăннă. Пирĕннисем 34 тупă, минометсен 8 батарейине, 142 пулемет, боеприпассен складне тата тĕрлĕ çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ.

Пирĕн авиаци Керчь проливĕнче тăшманăн ишсе çÿремелли хатĕрĕсем çине пыра-пыра бомбăсем пăрахнă. Нимĕç пехотине турттарса пыракан 5 баржăна шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 16 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Днепр шывĕн сылтăм енче пирĕн çарсем хăйсем тытса илнĕ вырăнсене аслăлатасшăн çапăçнă. Пĕр соединени чăçĕсем нимĕçсен контратакисене сире-сире ярса малалла куçнă та хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Кун каçа 800 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр районра нимĕçсем, Днепр шывĕн сылтăм енче пирĕн çарсем тытса илнĕ вырăнсене каялла туртса илме хăтланса, хăйсен пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсене çапăçăва кĕртсе янă. Питĕ хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Пирĕн çарсем тăшман контратакисене сирсе янă, нимĕçсен 2000 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă, 24 танкне тата хăй тĕллĕн çÿрекен 8 туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

Пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 32 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем кун каçиччен нимĕçсен фашистла захватчикĕсенчен 150 яла ытла ирĕке кăларнă. Малтанах хатĕрлесе хунă позицисемпе усă курса, тăшман хирĕç тăрать, анчах та, совет войскисем пыра-пыра çапнипе, хĕвеланăçнелле чакса пырать. Паян пĕр пысăк ял районĕнче вăйлăн çапăçнă. Каç пулса килнĕ тĕлелле пĕр чаçри боецсем нимĕçсене харăсах икĕ енчен атакăланă та, çав яла вăркăнса кĕрсе, тăшман гарнизонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 400 вилли ытла выртса юлнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 11 тупă, 35 пулемет тата çар пурлăхĕн склачĕ пур. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Калинин фронтĕнчи çарсем Невель хулипе чугун çул тĕввине тытса илнĕ хыççăн çаплах малалла наступлени туса пынă, чылай ялсене тытса илнĕ. Невель хули патне пымалли вырăнсенче тата хула урамĕсенче çапăçнă чухне пирĕн çарсем 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. 600 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Тăшман пирĕн çарсем малалла куçса пынине пур майсемпе те чарма хăтланать, анчах та унăн ĕçĕсем пăчланса пыраççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçнă та паян 60 яла ытла йышăнса илнĕ. 22 тупă, ултă кĕпçеллĕ 6 миномет, 140 автомашина, боеприпассен склачĕсене тытса илнĕ.

Пирĕн штурмовой тата бомбардировочнăй авиаци çĕр çинче наступлени туса пыракан хамăр çарсене активлăн пулăшса пырать, нимĕç çарĕсене тата пырса тăракан резервĕсене пыра-пыра çапать. 2 паровоз, 15 вагон, 200 автомашинăна çити пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата çÿлелле перекен тупăсем тăшманăн 36 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ Балтика тинĕсĕнче тăшманăн пĕтĕмпе 7.000 тонна таякан 2 суднине шыва путарнă. Унсăр пуçне тата нимĕçсен 3.000 тонна таякан тепĕр суднине вăйлă сиенленĕ.

* * *

Украинăн Днепр шывĕн сылтăм енчи районĕсенче кĕрешекен партизансен темиçе отрячĕ пĕр эрне хушшинче шоссе çулĕсем çинче 12 кĕпере çунтарса янă, тăшманăн 47 грузовой тата 16 çăмăл автомашинине сирпĕнтерсе янă. 120 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ е амантнă. Ровно облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ сентябрĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 23-мĕшне çитиччен чугун çул çинчи 4 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата нимĕçсен 3 поездне ÿпĕнтерсе янă. 26 вагонпа платформа çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Ку чугун çул участокĕнче поездсем çÿреме чарăннă.

* * *

Аяларах нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Краматорск хулинче тунă усал ĕçсем çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Туллимар даннăйсем тăрăх, гитлерла ирсĕрсем, хула коменданчĕ Моншке лейтенант тата бургомистр Шопен ертсе пынипе, оккупаци вăхăтĕнче хулари 6.000 мирлĕ çынна ытла асаплантарса вĕлерчĕç е персе пăрахрĕç. Меловой ятлă ту çинче, нимĕçсен концентрациллĕ лагерĕнчен инçех те мар вырăнта, фашистла сынçиенсем 3.000 арçынпа хĕрарăма тата ачасене персе пăрахнă. Чурасемпе сут тăвакан гитлеровецсем хула çыннисене нумайĕшне вăйпа Германие каторгăлла ĕçе хăваласа кайрĕç. Гитлеровецсем хулана çаратса пĕтерчĕç. Йывăр машинăсем тăвакан Ново-Краматорски тата Старо-Краматорски заводсене, цемент заводне, коксо-химически завода тата ытти предприятисене те ишсе антарчĕç. Хулара халăх пурăнмалли 1.000 çурта ытла çĕмĕрсе, ишсе пĕтерчĕç. Фашистла вăрă-хурахсем хулана йышăннă хыççăн малтанхи кунсенчех больницăсене хупса лартрĕç, малтан унти пĕтĕм пурлăха тата хаклă хатĕрсене пурне те çаратса тухрĕç. Каялла чакма пуçласан, нимĕçсем 4 больницăна, 2 поликлиникăна, питĕ лайăх хатĕрсемпе ĕçлекен ача больницине, ача çуратмалли çурта, юн паракансен станцине тата клиника лабораторине çунтарса е сирпĕнтерсе ячĕç. Хулари 18 шкултан мĕн пурĕ те 2 шкулăн хăшпĕр çурчĕсем кăна тăрса юлнă, ыттисене пурне те ишсе антарнă. Нимĕç сынçиенĕсем культура çуртне, Пушкин ячĕпе хисепленекен театра, «Штурм» ятлă клуба, пионерсен клубне çунтарса ячĕç. Стадиона çĕмĕрсе тăкрĕç, культурăпа кану паркне пĕтерсе лартрĕç.

Çак асăннă преступленисемпе ирсĕр ĕçсем фашистла сынçиенсем тунă мĕнпур усал ĕçсен пĕр пĕчĕк пайĕ кăна пулса тăраççĕ. Тăшман каллама çук ирсĕр. Гитлерла вăрă-хурахсемпе пуçкасакансен мĕнпур ирсĕр ĕçĕсене пурне те çырса тухма май та çук. Çав тери усал преступленисемшĕн нимĕнле хаяр тавăру та ытлашши пулма пултараймасть».

Акт çине нимĕçсен фашистла захватчикĕсен Краматорск хулинчи ирсĕр ĕçĕсене тĕрĕслекен комисси членĕсем: Луговой, Мышко, Пацуля, Рябченко, врач Забаровская, священник Д. Стрижко, учительница Н. Склярова алă пуснă

„1 Мая" колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисем Сталин юлташ патне янă çыру

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Иосиф Виссарионович Сталин юлташа

Свердловск облаçĕнчи Красноуфимск районĕнчи „1 Мая" колхозăн колхозникĕсемпе колхозницисенчен

Уралецсем Сире, пирĕн аслă учитель тата çулпуç, тупа туса каланине пурнăçа кĕртсе, Свердловск облаçĕнчи Красноуфимск районĕнчи «1 мая» колхоз государствăна тата Хĕрлĕ Çар фондне пĕтĕмпе 19.428 пăт тырă памалли плана çĕр процентпех тултарчĕ. Государствăна çавăн пекех тата аш-какай парса татрĕ, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пурнăçа кĕртрĕ. Колхоз государствăна планран иртерсе 78 пăт какай, 3.222 пăт тырă пачĕ.

Фашистла вăрă-хурахсенчен темиçе çĕр хулана, темиçе пин яла ирĕке кăларнă паттăр Хĕрлĕ Çарăн аслă çĕнтерĕвĕсен ячĕпе, «1 мая» колхоз 1943 çулта çĕршыва планран иртерсе 15.000 пăт тырă, 18.000 пăт пахча-çимĕç, 13.000 пăт çĕрулми пама сăмах парать. Çĕршыва мĕн пурĕ 46.000 пăт ялхуçалăх продукчĕ паратпăр. Кунсăр пуçне тата ирĕке кăларнă районсене 15 пуç мăйракаллă шултăра выльăх, 15 сысна тата 10 сурăх яратпăр.

Пур колхозсене те пирĕн пек тума ыйтатпăр.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем планран иртерсе парса, хамăр Хĕрлĕ Çара фашистла ирсĕрсене часрах аркатса тăкма тата ирĕке кăларнă районсенчи ишĕлнĕ хуçалăха ура çине тăратма пулăшар.

Эпир, Сталин юлташ, Сирĕн аслă кăтартăвăрсене тата эпир Сире, пирĕн юратнă атте, учитель, çулпуç, тупа туса каланине пурнăçа кĕртетпĕр тесе пĕтĕм чĕререн тупа тăватпăр.

Свердловск облаçĕнчи Красноуфимск районĕнчи «1 мая» колхозăн председателĕ Петр Петрович Липин.

Завод ĕçне тĕпренех лайăхлатса ярассишĕн

Пирĕн завод кăçал малтанхи çур çулта хăйĕн производство планне тултараймарĕ. Çапла вара эпир çĕршыва чылай продукци туса параймарăмăр.

Завод коллективĕ çакăн пек кая юлса пынине пĕтерессишĕн тимлĕн ĕçе тытăнчĕ. Рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва сарса пыни, вĕсем валли тухăçлăн ĕçлеме условисем туса пани завод ĕçне кĕскевăхăтрах лайăхлатма май пачĕç. Август уйăхĕн программине коллектив 107 процент тултарчĕ.

Ăмăрту стахановецсен йышне ÿстерчĕ. Малтанхи вăхăтра нормăна тултарса пырайман работницăсем Е. Ефимова, М. Давыдова, Ф. Никитина юлташсем юлашки вăхăтра кулленхи нормăна 115—120 процент тултарса ĕçлеççĕ, М. Михайловăпа М. Ловкина юлташсем 1,5 норма тăваççĕ. Паянхи куна заводра ĕçлекенсенчен 58 проценчĕ стахановецсемпе ударниксем шутланаççĕ.

Анчах завод ĕçĕнче çитменлĕхсем пур-ха: машинăсемпе туллин усă кураймастпăр, ĕç дисциплини те çителĕклĕ çирĕп мар. Малашне эпир, çитменлĕхсене пĕтерсе, завода ялан лайăх ĕçлекен тăвассишĕн кĕрешетпĕр.

Ф. ПРИКОВ,
Элĕкри сĕткантăр завочĕн главнăй инженерĕ

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Çулталăкри плана Октябрь уявĕ тĕлне тултарассишĕн

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар çĕнĕ çĕнтерÿсем туни çинчен калакан хыпарсем совет ĕççыннисене хытă савăнтараççĕ, фронта пулăшассишĕн вăйхăвата шеллемесĕр ĕçлеме хавхалантараççĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ, фронта ытларах пулăшас кăмăлпа Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, хăй çине пысăк обязательствăсем илчĕ. Обязательствăсенче çулталăкри производство планне уяв тĕлне тултарма, продукци хакне октябрь уйăхĕнче 8 процент йÿнетме палăртнă. Рабочисене техникăна вĕрентес тĕлĕшпе нумай ĕçсем пурнăçа кĕртме йышăннă. Техника кружокĕсенчен 40 çынна, стахановла шкулсенчен 25 çынна вĕрентсе кăлармалла тата çĕнĕ кружоксемпе шкулсем организацилесе, унта 50 çынна явăçтармалла.

Завод коллективĕ илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн ырми канми ĕçлет. Нумай рабочисем кунран кун çĕнĕ çитĕнÿсем туса пыраççĕ. Инструментальнăй цехри токарь Шейх Мухаметов нормăна 280 процент таран тултарать. Çавăн пекех К. Алексеева, В. Петров юлташсем куллен икшер норма тăваççĕ. Кун пек примерсене вуншарăн илсе кăтартма пулать.

Завод коллективĕ халĕ пĕр туйăмпа—Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне малашне те алăра тытса тăрас туйăмпа ĕçлет.

Е. ОГОРОДНИКОВА.

Çамрăксен фронтовой бригадисенче

Куславкка комбинатĕнче çамрăксен фронтовой бригадисен хисепĕ ÿссех пырать. Хальхи вăхăтра фронтовой бригадăсем 20 ытла.

Фронтовой бригадăсем хушшинче пуçланнă ăмăртура Т. Давыдов юлташ бригади малта пырать. Вăл август уйăхĕнче нормăна 240 процент тултарнă. Бригадăра 8 çын, вĕсем кашниех икĕ нормăран кая мар тăваççĕ. Сăмахран, Николай Матвеев тата Анисимов юлташсем нормăна 328-шар процент тултарнă.

Август уйăхĕнче Давыдов юлташ бригадине куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялав панă тата 1.000 тенкĕ укçа парса премиленĕ. Бригадăри рабочисем Хĕрлĕ ялава алăра çирĕп тытса тăрассишĕн тата тимлĕнрех ĕçлеме пулнă. Хăйсен сăмахне халĕ вĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ.

ВАГАНОВА.

Çулталăкри плана тултарнă

Союзутилĕн Шупашкарти контори октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана иртерсе тултарчĕ. Çулталăкри плана пĕтĕмĕшпе 192 процент тултарнă, уйрăммăн илсен,—хура металл енĕпе 125 процент, тĕслĕ металл енĕпе 110 процент, çĕтĕк-çурăк енĕпе 240 процент тата макулатура енĕпе 101 процент тултарнă.

ХЛЕБНОВ.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1943-мĕш çулхи сентябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Челноков юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода иккĕмĕш преми памалла тунă

Фронтовиксен ачисене пулăшма

Чăвашторгăн Канаш хулинчи уйрăмĕ (директорĕ Девяткин юлташ) фронтовиксен ачисем валли 250 мăчĕр çăмагă, кĕпе-йĕмсем çĕлесе пама 2.000 метр ытла пир-авăр уйăрнă. Кунсăр пуçне ачасем валли пиншаксем çĕлеме 1,800 тенкĕлĕх мамăк хатĕрленĕ

ЯЛХУÇАЛĂХ ĔÇĔСЕНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ФРОНТОВОЙ УЙĂХЛĂХ

Килес çулшăн та тырă парасçĕ

Тăван çĕршыва нимĕç захватчикĕсенчен тасатса пырса, фронтра паттăр Хĕрлĕ Çар [illegible]

[illegible] 1943 çулшăн тырă парса татрĕç. [illegible]

[illegible] «Красное пламя» колхоз 1944 çулхи [illegible] 300 центнер, «Хавал» колхоз 248 центнер тырă леçре. [illegible] Октябрĕн 7-мĕшĕнче колхозсем [illegible] 540 центнер, октябрĕн 8-мĕшĕнче 550 центнер тырă леçрĕç.

Районри 10 колхоз аван çапса пĕтерчĕ. [illegible] Октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне районра тата 25—30 колхоз аван çапса пĕтерет. [illegible]

А. ДОБРОДУШЕВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Аван çапса пĕтертĕмĕр

ШАХАСАН. Пирĕн «Ямурза» колхоз октябрĕн 3-мĕшĕ тĕлне аван çапса пĕтерчĕ. [illegible] «Фронтовой уйăхлăх» хушшинче [illegible]

Н. НЕСТЕРОВ,
«Ямурза» колхозăн бригадирĕ.

Кунта [illegible] сухала тытăнассĕ?

СЕНТЕР, октябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). [illegible] «Красный флот» колхоз [illegible] 70 гектар [illegible]

Мĕн Хураска ялсоветĕнче 4 колхоз [illegible] пĕр гектар та сухаламан. Ялсовет исполкомĕ [illegible]

А. СОЛОВЬЕВ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕç

КУСЛАВККА, октябрĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Фронтовой уйăхлăха хутшăннă хыççăн «Большевик» колхоз ĕç тухăçлăхне ÿстерчĕ. Кунĕн-çерен аван çапса, вуна кун хушшинче государствăна тырă парса татрĕ. Ыран-паянах аван çапса пĕтерет, [illegible] ĕçсене вĕçлет. Çĕрулми кăларса пĕтерчĕ, кĕрхи [illegible] турĕ.

Энгельс ячĕпе тăракан колхоз фронтовой уйăхлăх пуçланиччен питĕ кая юлнăччĕ. Халĕ районри малта пыракан колхозсемпе танлашрĕ. Государствăна тырă парса татрĕ, ыран-паянах аван çапса пĕтерет.

И. ПОДКЛЕТНОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Молотилкăсем халĕ те ĕççĕр ларасçĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Хамăр корр., телефонпа). СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1943 çулта тыр-пулăпа пухса кĕрсе [illegible] хатĕрлесе парасси çинчен» йышăннă постановленийĕнче кăтартнă тăрăх, колхозниксене панă аванс государствăна панă тырăн 15 процентĕнчен иртмелле мар. Çак закона «12 лет Октября», «Исаково», «Чăваш Коммуни» ятлă ытти колхозсен руководителĕсем пăсассĕ.

«12 лет Октября» колхозра (председателĕ Васильев) иртнĕ çулхи валеçĕнĕнчен фонда йăлтах салатса янă. Колхозниксене (вĕсем хушшинче ĕçкунĕсен минимумне тултарманнисем те пур) тырă мĕнле пуласси шута илмесĕр аванс парса тăнă.

«Чăваш Коммуни» колхоз государствăна тырă памалли графике пурнăçласа пымасть. Анчах аванс парса государствăна панин 40 процентчĕ чухлĕ салатнă. Фронтовой уйăхлăхра та колхоз тăрăшса ĕçлени курăнмасть.

«Исаково» тата Молотов ячĕпе хисепленекен колхозсенче тырра вĕçĕ-хĕррисĕр тăккалаççĕ. Вырнă вăхăтра та ку колхозсенче нумай тăкак пулчĕ, аван çапнă çĕрте те ăçта пăхнă унта тырă тăккаланни курăнать. Молотов ячĕпе тăракан колхоз 9 гектар сĕлле, 7 гектар викăна халĕ те уйхиртен турттарса кĕртмен, икĕ гектар вăрлăхлăх клевера вырса пухман.

Фронтовой уйăхлăхăн малтанхи вунă кунĕ иртрĕ. Анчах район графике халĕ те кĕреймерĕ-ха. Аван çапмалли бригадăсем туман, нумай молотилкăсем халĕ те ĕççĕр лараççĕ.

С. ШАДИН.

Кĕрхи çĕртме тумалли график пурнăçа кĕмест-ха

ЕЛЧĔК. Малта пыракан колхозсем кĕрхи çĕртме туса пĕтерĕç. «Марс» колхоз 431 гектар, Ворошилов ячĕпе хисепленекен колхоз 260 гектар, «МОПР» колхоз 155 гектар, «Хуна» колхоз 321 гектар сухаласа, кĕрхи çĕртме тумалли çулталăкри планĕ пурнăçларĕç. Анчах [illegible] район кĕрхи çĕртме тумалли [illegible] графикне халĕ те пурнăçламасть. Октябрĕн 1-мĕшĕнче 5-мĕшĕ хушшинче графике районĕпе 72 процент çеç пурнăçларĕ.

Кĕрхи çĕртмене вăхăтра туса хăварни тырпул тухăçлăхне ÿстерет. Çакна вăл кашни колхозникĕн [illegible] Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре [illegible] «Пахарь», «Авангард», «Сатурн» колхозсем [illegible] «Сатурн» колхозăн кĕрхи çĕртме 500 гектар тумалла, анчах халĕ мĕн пурĕ те 69 гектар çеç сухаланă.

Н. ВОЛКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Ÿкерчĕк çинче: Ишлей районĕнчи «Коммунист» колхозăн чаплă конюхĕ М. Г. ГРИГОРЬЕВ юлташ. Вăл колхоза 10 çул хушши ĕçлесе 2 кĕсререн 19 лаша ÿстерчĕ.
Н. ДАНИЛОВ фото ÿкерчĕкĕ.

Çамрăксен авăн çапакан бригади

КУКЕÇ, октябрĕн 8-мĕшĕ. (Телефонпа). Ленинла-Сталинла комсомол 25 çул тултарнă кун çывхарса килнĕ май, районри комсомолецсем хушшинче уяв умĕнхи ăмăрту хăватлăн саралса пырать. Çак куна комсомолецсемпе çамрăксем уйхир ĕçĕсене йăлтах вĕçленипе, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илме тăрăшаççĕ. Çавăнпа пĕрлех Хĕрлĕ Çарăн офицерĕсемпе рядовойĕсем патне комсомол 25 çул тултарнă ятпа парнесем ярса пама хатĕрленеççĕ. Альгешри тата Хыркассинчи туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем 160 енчĕк, 70 сăмса тутри, чăлхасемпе алшишсем тата хуç-карандашсем ярса пама хатĕрленĕ. Комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсем те çавнашкал парнесем хатĕрлеççĕ.

Умра тăракан задачăсене уявччен пурнăçлас тесе, эпир район центрĕнчи комсомолецсенчен авăн çапас тĕлĕшпе ятарласа пĕр бригада организацилерĕмĕр. Унта пĕтĕмпе 20 комсомолец. Ĕнтĕ виççĕмĕш кун эпир «КИМ» колхозра (вăл кая юлса пыракан колхоз) авăн çапатпăр. Малтанхи кун кĕске вăхăтрах икĕ тонна тырă çапрăмăр. Бригада членĕсенчен уйрăмах Кузьмина, Зиновьева, Иванова, Евгеньева комсомолкăсем авăн ĕçленине палăртмалла.

А. СМИРНОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

Тăванла пулăшу

ЭЛĔК. Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсенчи колхозсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пулăшас тесе, Ураскилт ялсоветĕнчи колхозсем выльăхсем ярса пама пуçтăнчĕç. Выльăх хатĕрлевĕн районри пунктне çак кунсенче «Маяк» колхоз 2 сысна, 2 сурăх, Охваркари «Хăват» колхоз 5 сысна, 3 сурăх, Шĕнерпуçĕнчи Молотов ячĕпе хисепленекен колхоз 2 сысна, 2 сурăх леçсе пачĕç.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Комсомолецсем ĕçе пуçарса пыраççĕ

(Хамăр корреспондентран)

Толинари «Новый путь» колхоз членĕсем (Хĕрлĕ Чутай районĕ) кăçал уборкăра пит хастарлăн ĕçлерĕç. 358,16 гектар тырра вĕсем вăхăтра çапса пĕтерĕç. [illegible] 30 гектар [illegible]

[illegible] комсомолецсем, уйрăмах комсомолецсем [illegible] А. Аничков [illegible] А. Васильева [illegible] 60—70 [illegible]

[illegible] çемĕ турттарчĕ. Аван çапнă çĕрте [illegible] бригади [illegible]

Комсомолăн «Красная звезда» колхозри пуçламăш организацийĕ те кăçалхи уборка вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче агитаци ĕçне [illegible] Кунта колхозра 3 номер стена хаçачĕ, 11 номер боевой листок кăларнă, тĕрлĕ темăсем [illegible] 33 хут [illegible] Уборка вăхăтĕнче 27 комсомолец [illegible] Герасимова, (О. Трифонова комсомолка [illegible] норма [illegible] Н. Викторова, З. Трифонова, Е. Трифонова [illegible] «Красная звезда» [illegible]

[illegible] комсомолецсем [illegible]

вĕсен авторитечĕ пысăк. Е. Сергеевпа Ф. Бардасов комсомолецсем кĕракинче нормăсене ирттерсе тултарнă. Халь вĕсем кĕрхи çĕртме тăваççĕ.

«Мотор» колхозри комсомолецсем государствăна тырă леçес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Полозин, Судеркин, Сигаев, Никифоров комсомолецсем куллен хатĕрлев пунктне 12—13 центнер тырă турттараççĕ.

Комсомолецсен ĕçри примерĕ союзра тăман çамрăксен хастарлăхне ÿстерчĕ. Вĕсем комсомолецсем пек ĕçлеме тăрăшаççĕ.

Юлашки вăхăтра районра малта пыракан çамрăксене комсомола илес ĕç те чылай лайăхланчĕ. Август уйăхĕнче 47 çамрăка комсомола илнĕ. Районри комсомол организацийĕ кăçал хăйĕн ретне 202 çамрăка илнĕ.

Хальхи вăхăтра районри комсомолецсем государствăна тырă, пахча-çимĕç тата ытти продуктсем парас, авăн çапас, кĕрхи çĕртме тăвас тата обществăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл касарма хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеççĕ. Вĕсем хăйсем умне çак фронтовой уйăхлăхра ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлес задача лартнă.

Х. ЛИСИН.

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине ирттерме хатĕрленни

СССР Наркомфинĕ укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейине ирттермелли условисемпе йĕркесене йышăнса çирĕплетнĕ. Лотерея çак октябрĕн 25-мĕш числинче пуçланать.

Лотерея пуçланиччен перекет кассисем пур предприятисемпе учрежденисене тата колхозсене те лотерея билечĕсем парса тухаççĕ. Вара унта кашни рабочи, служащи, кашни колхозник çав билетсене, хăй кăмăлне кура, çийĕнчех тÿлесе тупса е темиçе срокра тÿлесе тăпма килĕшсе илет. Темиçе срокра тÿлесе татмалла туса илсен, тÿлевĕн юлашки пайне 1944-мĕш çулхи январĕн 1-мĕш числи çитиччен парса татас пулать.

Лотерея билечĕсене комсодсем сараççĕ. Лотерея билечĕсемшĕн тÿлемелли укçана предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи бухгалтерсем пухаççĕ.

Лотерея билечĕсене предприятисемпе учрежденисенче тата колхозсенче сарнисĕр пуçне, билетсене тата перекет кассисенче сутаççĕ.

Госзнак фабрики лотерея билечĕсене пичетлесе пĕтернĕ ĕнтĕ. Халĕ лотерея билечĕсене перекет кассисене яма пуçланă.

Япаласем выляса илнĕ билетсем тăрăх пама СССР Наркомфинне çителĕклĕ таран тавар панă.

Çак кунсенче укçапа япаласен лотерейи çинчен ВЦСПС секретариатĕнче сÿтсе-явнă. Пур профсоюз организацийĕсене те лотерея ирттерес ĕçе питĕ активлăн хутшăнса ĕçлеме, лотерея билечĕсене сарма вăйлăн пулăшма хушнă. (ТАСС)

Донец бассейнне юсама пулăшаççĕ

Узбекистанри ремесла училищисемпе ФЗО шкулĕсенчен вĕренсе тухнă 750 çамрăк Донбаса тухса кайнă. Çав çамрăк слесарьсем, токарьсем, штукатурсем, каменщиксем тата платниксем нимĕç захватчикĕсем ишсе аннарнă шахтăсене, заводсене, электричество станцийĕсене, пурăнмалли çуртсене юсанă çĕрте ĕçлеме пуçлаççĕ. Çав çамрăк мастерсем хушшинче вăрçă пуçламĕшĕнче Донец бассейнĕнчен Узбекистана куçса кайнă шахтерсен тата Украинăри металлургсен ачисем нумай.

Çамрăксем хăйсемпе пĕрле инструментсем тата тĕрлĕ оборудовани илсе каяççĕ. (ТАСС).

Нимĕçсем аркатнă хыççăн çĕнĕрен юсаса янă фермăсен малтанхи продукцине Хĕрлĕ Çар валли параççĕ

Смоленск облаçĕнчи Новодугински районри Дроздов ячĕпе хисепленекен колхоза вăрçă пуçламĕшĕнче куçарса кайнă сĕт-çу ферми каялла таврăннă. Колхозниксем митинг туса ирттернĕ. Çав митингра вĕсем чи малтан суса илнĕ 500 литр сĕте аманнă боецсем валли госпитале леçсе пама йышăннă. Вĕсене кура çав районри Новодугински, Курбатовски ялсоветĕсенчи ытти колхозсем те хăйсен выльăхĕсене каялла илсе килнĕ хыççăн суса илнĕ сĕте темиçе çĕршер литр аманнă боецсем валли леçе-леçе параççĕ. (ТАСС).

Пирĕн авиаци Житомир, Коростень, Джанкой, Городок чугун çул тĕввисене, Мелитополь, Шклов, Речица станцийĕсене тапăнни

Октябрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Житомир, Коростень, Городок (Витебскран çурçĕртерехре), Джанкой чугун çул тĕввисене, Мелитополь, Речица (Гомельтен хĕвеланăçнерехре), Шклов станцийĕсене тапăннă. Çар техники, горючи, боеприпассем тата тĕрлĕ çар пурлăхĕ турттарса пыракан тăшман поезчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем, пăрахнине пула темиçе поезд тата вагонсем нумай çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă. Чугун çул станцийĕсемпе тĕввисенче çулсем ишĕлнĕ.

Пирĕн самолетсем пурте хăйсен базисене таврăннă.

Ют çĕршывсенче

СОВЕТ ПАРТИЗАНĔСЕМ ГИТЛЕРЛА ВĂРĂ-ХУРАХСЕНЕ ПĔТЕРЕÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейче Украине цейтунг» ятлă гитлерла хаçат çапла çырса пĕлтерет: юлашки вăхăтра Винницăра тата ытти хуласенче те «нимĕçсен Украинăри администраци представителĕсене чылай» вĕлернисем пулчĕç. Сăмахран каласан, чугун çул администрацийĕн чиновникĕсене Фриц Уле тата Эрих Гаруса вĕлернĕ. Ровно хулинче Ганс Гуго Пиргаф лейтенанта тата Пекер Эльсен-Костен барона вĕлернĕ.

ГОЛЛАНДИ ХАЛĂХĔ НИМĔÇСЕН ФАШИСТЛА ЗАХВАТЧИКĔСЕМПЕ ХАЯРРĂН КĔРЕШЕТ

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейче цейтунгин Нидерланден» ятлă фашистла хаçат çапла ÿпкелешет: Голландири оккупаци влаçĕсен представителĕсене тата Голланди фашисчĕсене Голландире хутран-ситрен кăна мар, кулленех тапăнма пуçларĕç, тет. Ассен хулинче полицин военно-полевой сучĕ террорла ĕçсем туса тăнă çынсен пĕр ушкăнĕн ĕçне пăхса тухнă. Çав суд айăпланакан вунă голландеца вĕлермелле тунă, айăпланакансенчен теприне вунă çул хушши тĕрмене хупса усрамалла тунă. Вара çав вунă çынна суд пулса иртнĕ хыççăнах персе пăрахнă.

Хаçат çырнă тăрăх, Фрисландире, Гронингенра тата Дрентра çавăн пек «питех те чарусăр» террорла тапăнусемпе саботаж тунисем сахалтан та 70 хутчен пулнă. Пуринчен те ытларах «Германие яма çынсем пухакан» учрежденисен чиновникĕсене тапăнма пуçланă. Карточкăсем валеçекен бюросене тапăнасси те чарăнмасть. Тапăнусенче тытса илекен апат-çимĕç карточкисене вăрттăн ĕçлесе тăракан çынсене валеçсе параççĕ. Çавăн пекех тата Голланди фашисчĕсене тата оккупаци влаçĕсемпе килĕшсе ĕçлекенсене те час-часах тапăнаççĕ.

Германи авиацийĕ Англие тапăнни

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: октябрĕн 8-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман авиацийĕ Лондона тапăннă. Пролив урлă каçнă 60 нимĕç бомбардировщикĕнчен хула тĕлне 15-шĕ кăна вĕçсе çитме пултарнă. Темиçе тĕлте бомбăсем сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Данире лару-тăру çивĕчленсе кайнă

ГИММЛЕР ПАЛАЧ КОПЕНГАГЕН ХУЛИНЕ «ЙĔРКЕ ТУМА» ТУХСА КАЙНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Дани патриочĕсем нимĕçсене хирĕç сăтăрла ĕçсем нумай тăваççĕ. Пĕр сентябрь уйăхĕн иккĕмĕш çурринче кăна çавăн пек сăтăрла ĕçсем çирĕм ытла тунă. Уйрăмах илсе кăтартсан, çапла Копенгаген хулинче нимĕçсен казармине вут тивертнĕ, икĕ электротрансформатор станцине ишĕлтерсе антарнă, нумай тĕлте нимĕçсен телефон пралукĕсене каса-каса татнă.

Данири лару-тăру çав тери çивĕчленсе çитнине кура, Германин гестапо пуçлăхĕ—вăлах шалти ĕçсен министрĕ—Гиммлер пуç касакан Копенгаген хулине тухса кайнă.

США-ра ÇАР ХАТĔРĔСЕМ ТĂВАССИ ÿСНИ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтерессĕ: США-ра çак çулталăкăн 3-мĕш кварталĕнче тĕрлĕ хĕçпăшалсем 16 миллиард долларлăх ытла туса кăларнă, ку вăл 1941-мĕш çулта туса кăларнинчен 5 хут ытла пулать. Кăçал Америкăн хĕçпăшал туса кăларакан промышленносĕн продукцийĕ Германин, Японин тата Италин çар завочĕсен пĕтĕм продукцийĕнчен икĕ хута яхăн ытларах пулать. 1941-мĕш çулта çав çĕршывсем пĕрле США-ран 5 хут ытларах хĕçпăшал туса кăларнă пулнă.

КĔСКЕН

Италире союзниксен çарĕсем нимĕçсен хирĕç тăмалли пунктне, Италин тĕп хули—Рим патне илсе пыракан çул çинчи Капуя хулине йышăнса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче союзниксен çарĕсем, нимĕçсен темиçе контратакине сирсе ярса, хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă.

* * *

Октябрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ нимĕçсен Родос тата Крит утравĕсем çинчи аэродромĕсене, çавăн пекех тата Эгей тинĕсĕнчи Скирос утравĕ çинчи гаване (карапсем чарăнакан вырăна) тапăннă.

* * *

Италире вăрçă ĕçĕсем пуçланнăранпа союзниксен çарĕсем нимĕçсен 502 самолетне тытса илнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çурçĕрти тинĕс çулĕсен Мускаври Главнăй Управленийĕнче АРКТИКĂРИ 342-МĔШ №ЛĔ ПОЧТА АГЕНТСТВИНЕ уçнă. Çав агентств СССР Союзĕн пур пунктĕсенчен те Арктикăна ямă çулталăк тăршшĕпех корреспонденцисем йышăнать.

Арктикăна çыру ярас текенсен конверт çине çакăн пек адрес çырмалла:

МОСКВА, УЛ. РАЗИНА, ДОМ 9,
АРКТИЧЕСКОЕ ПОЧТОВОЕ АГЕНТСТВО.

Малалла çырăва ăçта ямалли пункт ятне çырмалла, çырăва илме тивĕçлĕ çыннăн хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне çырмалла.

Адрес çырмалли тĕслĕх:

МОСКВА, 342,
Ул. Разина, дом 9,
Арктическое почтовое агентство
Бухта Кожевникова
Иванову Сергею Петровичу

Москва, 55, Тихвинская ул., 24
кв. 47. Иванова М. С.

Почтовăй карточка ярас пулсан—60 пус, хупă çыру ярас пулсан (20 грамм таран турттаканнишĕн)—1 тенкĕ тÿлемелле.

Полярниксем патне яма укçа перевочĕсем, посылкăсем, хаклă çырусем тата адресата алла тыттарни çинчен каялла пĕлтермелли хутпа ямалли çырусене йышăнмаççĕ

ÇУХĂНУ ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН ЧĂВАШ УПРАВЛЕНИЙĔ.

ИЗОЛЯЦИ МАТЕРИАЛĔСЕН ЗАВОЧĔ оборудовани юсама тата монтаж тĕлĕшпе ĕçлеме пултаракан тĕрлĕ квалификациллĕ рабочисене пухать.

Рабочисем валли общежити тата столовăй пур.

Çавăн пекех тата снабжени начальникĕ, машинистка, счетовод тата ФЗО шкулĕнче вĕренекенсене вĕрентме пултаракан мастерсем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары Заволжский детский дом, дирекция завода изоляционных материалов. 2—1.

СССР Нархомтекстилĕн „Энерготрансучтекстилĕн" Шупашкарти филиалĕ çак октябрь уйăхĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен 3-мĕш класри шоферсене хатĕрлекен курса кĕрес текенсене илет. Курсра вĕреннĕ чух производствăра ĕçлеме май килмест.

Курсра вĕреннĕшĕн укçа тÿлемелле мар.

Мĕн пурĕ 2 уйăх вĕренмелле.

Курса арçынсене те, хĕрарăмсене те илеççĕ, 17 çултан çамрăк пулмалла мар, вĕренÿ тĕлĕшĕнчен 7-мĕш класра вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Заявленисене çак адреспа памалла: гор. Чебоксары, ул. Карла Либкнехта, 14. Тел. 6—93. 2—1.

Торф предприятийĕн ансăр чугунçулĕ çинче ĕçлеме машинист помощникĕсем, движени диспетчерĕсем тата çулйĕр мастерĕсем вĕрентсе кăларакан пĕр уйăхлăх курс уçăлать.

Вĕренекенсем валли общежити, выртса-тăма тÿшек-минтерсем пур, стипенди параççĕ, тăрантса усраççĕ.

Кĕрес текенсен 18 çултан кĕçĕн пулмалла мар, пĕлÿ тĕлĕшпе 5-мĕш класран вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Левый берег реки Волги. Заволжское торфопредприятие 2—1.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ ПУР ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ТЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Тарасасене юсама тата вĕсене техника тĕлĕшпе заказчиксем патĕнче майлаштарса тăма чăвашсен тарасасем юсакан завочĕн мастерĕсем кăна пултараççĕ, вĕсен ятарласа панă удостоверени пулмалла.

Тарасасене заводсăр пуçне кам та пулин урăх юсанине пĕлсен, айăплисене администраци йĕркипе ответ тыттараççĕ, хăшпĕр чухне уголовнăй йĕркепе те айăплаççĕ.

Хăйсен тарасисене яланах юсавла тытса тăрас текенсем заводпа договор тума пултараççĕ.

Виçепе тараса комитечĕн Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи уполномоченнăйĕ.
Чăвашсен тарасасем юсакан завочĕ.

Чăвашсен опытлă лесхозне главнăй бухгалтер кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Ново-Поперечная, 1. Тел. 7—16.

ПАТĂРЪЕЛĔНЧИ ÇУЛМУÇÇИСЕМПЕ СЫРЛА ТĔМĔСЕН ПИТОМНИКĔ

кĕркунне сад пахчисенче лартса хăварма улмуççисемпе çырла тĕмĕсем: улмуççисем, грушăсем, чей çырли йывăççисем, хурлăхан, хăмла çырли йывăççисем, çĕр çырли тĕмĕсем, çавăн пекех тата декораци йывăçĕсем: вĕрене, тополь, çăка, акаци пурне те тата кама мĕн чухлĕ кирлĕ, çавăн чухлĕ сутать.

Адрес çапла: Чувашская АССР, село Батырево, Чкаловского района. 2—1.

ЧĂВАШПРОМСТРАХКАССĂНА ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: довереннăй врач, оргинспектор, ача учрежденийĕсем тĕлĕшпе ĕçлекен бухгалтер тата шут ĕçне вĕренес текен учениксем.

Адрес çапла: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, дом № 21 (здание Кожупрожи); телефон 6—79 (два звонка). 2—1.

Заготзернон Шупашкарти пунктне главнăй бухгалтер, бухгалтерсем, кассир тата таксировщиксем кирлĕ.

Ĕçе кĕрекенсем валли столовăй пур.

Адрес: Чебоксары, Нагорная, 2.

РОССНАБСБЫТĂН ЧĂВАШ ОТДЕЛЕНИЙĔ, Чăваш АССР Совнаркомĕ йышăннă постановлени тăрăх, пур автохуçалăхсене те вĕсен аллинчи мĕнпур кивĕ авторезинăна тата винтельсене Росснабсбытăн Çĕмĕрлери, Канашри, Йĕпреçри тата Шупашкарти склачĕсене пама ыйтать.

РОССНАБСБЫТĂН ЧĂВАШ ОТДЕЛЕНИЙĔ. 2—1.

Чăваш АССР Совнаркомĕн 1943-мĕш çулхи августăн 10-мĕшĕнче йышăннă 1018-мĕш номерлĕ постановленийĕ тăрăх, октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Чăвашсен Государство Филармонийĕ çĕнĕрен ĕçлеме тытăннă.

Çак пĕлтерĕве пичетлесе кăларнă хыççăн уйрăм çынсем, концертсем паракан бригадăсем, театр ансамблĕсем, çавăн пекех тата художествăллă пултарулăх коллективĕсем те Чăваш АССР территорийĕнче укçалла туса ирттерме шутлакан нимĕнле гастролĕсене те Государство Филармонийĕ ирĕк памасăр туса ирттерме пултараймаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, партии пурнăç пайĕн — 3—99, промышленкоçпа ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 84 п. л.